25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АВГУСТ
23
ВЫРСАРНИКУН
197 (6132) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çĕршыва фронта—лайăх пахалăхлă продукци

Промышленноçра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн тăвалтăмĕш уйăхĕ пырать. Рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем фронтпа халăх хуçалăхне продукци ытларах парассишĕн, гитлерла захватчиксене çĕнтерме тăван Хĕрлĕ Çара вăйлăнрах пулăшассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Ăмăрту участникĕсем продукци хисепĕшĕн тăрăшнипе пĕрлех унăн пахалăхĕшĕн те тимлĕн кĕрешеççĕ. Мĕншĕн тесен государственнăй плана ирттерсе тултарнипе пĕрлех техникăллă условисене юрăхлă продукци туса парсан çеç ăмăртура мала тухма пулать.

Продукци пахалăхĕ—Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн законĕ, унăн тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри. Малта пыракан предприятисем çапла тăваççĕ: ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешнĕ вăхăтра продукци пахалăхне уйăхран уйăха лайăхлатса пыраççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ Н-ски завод вăл уйăх ĕнтĕ лайăх пахалăхлă продукци туса кăларать. Завод панă продукцие йышăннă чух браклани пĕрре те пулман. Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь те (директорĕ Жилочкин юлташ) хăйĕн ĕçне пĕрахăçланине пĕлместь. Вăл панă продукцие пурне те бракламасăр йышăнаççĕ, тăтăшах лайăх тата отлично хак параççĕ.

Республикăри ытти заводсемпе фабрикăсен ăмăртура çитĕнÿ тума малта пыракан предприятисен коллективĕсенчен вĕренмелле, вĕсенчен пример илмелле.

Социализмлă ăмăрту — пысăк вăй. Унăн брака пĕтĕмпех пĕтерме пулăшмалла. Пахалăхшăн кĕрешмелли майсене партин XVIII-мĕш конференцийĕн решенийĕсенче тĕплĕн кăтартса хăварнă: «...пирĕн предприятисенче, — тесе çырнă решенисенче, — **технологи процесĕнчи çирĕппен те çирĕп дисциплинăна пăхăнмалла** тăвас пулать, мĕн пур предприятисенче технологиллĕ процессен тĕрĕс инструкцийĕсене ĕçе кĕртмелле, вĕсене пăхăнса пынине контрольлесе тăмалла тата, çапла вара, çирĕплетсе панă стандартсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшÿллĕ, **лайăх пахалăхлă тата комплектлă продукци туса кăлармалла тăвас пулать».**

Парти организацисен задачи — çак кăтартусене пĕтĕмпех пурнăça кĕртес ĕçре производство командирĕсене пулăшасси. Вĕсен техника правилисемпе инструкцисене мĕн таран пăхăнса ĕçленине, производствăри йĕркелĕхе тĕрĕслесе тăмалла, мĕлпĕлтетсе тата чуххăмăн ĕçленине пĕтермелле. Брак тăвакансемпе, продукцие пăсакансемпе, чĕртаварсене, материалсене сая яракансемпе пĕр хĕрхенÿсĕр кĕрешмелле.

Ĕç пахалăхне лайăхлатмалли майсенчен пĕри вăл — талăкри график тăрăх ĕçлени пулать. Рабочисен ĕçне тĕрĕс организацилени, производствăра çирĕп йĕрке туни, оборудованисемпе пĕлсе усă курни продукцие ытларах туса кăларма май парать, унăн пахалăхне лайăхлатать. Малтанах палăртса хунă графиксăр ĕçлени—пĕрре хыпăнса ÿкни, тепре чарăнса ларни брак тума пулăшать, производствăна сиен кÿрет.

Куславкка комбинатĕнче (директорĕ Шелухин юлташ) иртнĕ уйăхра графика тивĕç пурнăçламан пирки начар пахалăхлă продукци туса кăларнă. Продукцие йышăнман. Халĕ августри плана тултарас вырăнне июльри шăйрăксене тÿрлетме тивет, вăхăтра тумалли ĕç юлса пырать.

Уйрăм цехсемпе участоксем хушшинче çирĕп çыхăну çукки, технологи дисциплинине пăснипе Канашри вагонсем юсакан заводра та курма пулать. Вагон кустăрмисем тăвакан цехăн сÿрĕклĕхĕ пирки ытти цехсенчи ĕç чарăнса тăни пĕрре мар пулнă. Хăшпĕр мастерсен смени туса кăларнă продукцин пахалăхĕ техникăллă условисене юрăхлă мар. Сăмахран, тимĕрçĕ цехĕнчи Дементьев мастер смени панă пĕр йышши детале 990 штука бракланă. Ĕç пахалăхĕ çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхни Трухин, Ткаченко юлташсем ертсе пыракан цехсенче те пулкалать. Ткаченко юлташăн цехĕ туса кăларнă продукцие хăшпĕр кунсенче 15—17 процент таран йышăнман.

Пахалăхшăн кĕрешнĕ çĕрте техникăллă контроль отделĕсен пысăк ĕçсем тумалла. Вĕсен хатĕр продукцие тĕплĕн пăхса йышăнмалла, начар пахалăхлине предприятирен кăларса ямалла мар. Унпа пĕрлех рабочисене ĕç техникине вĕрентессипе ытларах интересленмелле, чĕртаварсемпе материалсене пăсасран сыхламалла.

Предприятисенче халĕ производствăна тĕплĕн вĕренсе çитмен çамрăк рабочисемпе работницăсем сахал мар ĕçлеççĕ. Инженерсемпе техниксем, мастерсемпе опытлă рабочисен вĕсене технологи инструкцийĕсемпе паллаштармалла, производство дисциплинине пăхăнса ĕçлеме хăнăхтармалла. Ватă рабочисен çамрăксене тухăçлă ĕçлеме çеç мар, лайăх пахалăхлă продукци пама та, брак тăвасран сыхланма та вĕрентмелле.

Çакна асра тытмалла: начар продукци панине мирлĕ вăхăтрах хытăн сивленĕ пулсан, вăрçă вăхăтĕнче пушшех те тÿсме пултараймастпăр. Халĕ лайăх ĕçлени Хĕрлĕ Çара пулăшать, начар ĕçлени тăшмана пулăшать, пахалăхсăр продукци пани государство умĕнче преступлени туни пулать.

«Пахалăхсăр е комплектлă мар продукци панăшăн тата обязательнăй стандартсене пăснăшăн промышленноçлă предприятисем ответлă пуласси çинчен» СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа халĕ нихăçанхинчен çирĕппĕн пурнăça кĕртсе пымалла. Изделисен пахалăхĕшĕн предприятири кашни работник çĕршыв умĕнче ответлă пулассине ÿстермелле.

Хуть те кам пул эсĕ: техник е инженер, уборщик е контролер, токарь е слесарь; хуть те ăçта ĕçле эсĕ: цехра мастерскойра, складра — пур çĕрте те, пур ĕçре те, пур чух та **пахалăхшăн кĕреш!** Кашни издели, кашни деталь, винт пахалăхлă пултăр. Лайăх тавар ĕççынниcене ытларах усă парать, лайăх хĕçпăшал тăшмана ытларах пĕтерет. Пахалăх фашистсене çĕнтерме пулăшать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн тепĕр уйăхĕ — август вĕçленсе пырать. Августри итогсене тунă чух плана хисеп енчен çеç мар, пахалăх енчен тултарнине те пăхас пулать. Пахалăх августри итогсен тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри пултăр. Ăмăрту çĕршывпа фронта лайăх пахалăхлă продукци пама пулăштăр.

Колхозниксемпе колхозницăсем! Тырпулсене пухса кĕнĕ чухне çакна асра тытăр: тырпула тăккалани хăвăршăнах сиенлĕ, вăл сирĕн ĕçкунĕн хакне йÿнетет!

„Нÿрĕ“ шухăшлă руководительсем

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, районри колхозсен государствăна обязательнăй йĕркепе тырă, ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕçе уборкăн малтанхи кунĕнченех тытăнмалла. Çавна май хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарса тăма кашни колхозах пилĕккунлăх заданисем çирĕплетсе панă.

Çак кăтартăва районри чылай колхозсен руководителĕсем начар пурнăçласа пыраççĕ-ха. Августăн 10-мĕшпе 15-мĕш хушшинчи пилĕккунлăхра районăн хатĕрлев пункчĕсене 110 тонна тырă леçмеллеччĕ, анчах пурĕ те 55,2 тонна çеç леçнĕ. Августăн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинче те район ку задание çурри ытларах çеç тултарчĕ.

Ĕç начар тăнине хăшпĕр колхозсен руководителĕсем «тырă чĕрĕ» пулнипе ăнлантарса пама хăтланаççĕ. Çак «сăлтавсене» пула августăн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинче районри 96 колхозран 30-шĕ государствăна пĕр пĕрчĕ тырă та паман.

Районăн государствăна тырă памалли пилĕккунлăхри заданисене тăтăшах пурнăçласа пыма пур условисем те çителĕклĕ. Колхозсенче авăн çапнă çĕрте 45 молотилка ĕçлеççĕ. Пур колхозсенче те тенĕ пекех государствăна тырă турттарса тăма транспорт бригадисем организациленĕ. Анчах «Коминтерн», «Красное Сормово» колхозсенче вăл бригадăсем халĕ те ĕçе тытăнман-ха. Транспорт бригадисем валли уйăрнă лашасемпе çынсене асăннă колхозсен правленийĕсем ытти ĕçсенче усă кураççĕ. Çакăн пек туни вăл тĕрĕс мар. Транспорт бригадисем валли уйăрнă лашасемпе çынсене государствăна тырă турттарнă çĕрте ĕçлеттермелле.

Государствăна тырă памалли пилĕккунлăхри задание кашни колхозăн çирĕппĕн пурнăçласа тăмалла.

Н. ГЛАДКОВ.

КĔЛТЕСЕНЕ КАПАНА ХЫВАÇÇĔ, АВĂН ÇАПАÇÇĔ

ВĂРМАР, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Районри колхозсем тырăсене вырнипе пĕр вăхăтрах кĕлтесене кÿрсе капана хывас, авăн çапас ĕçсене те хăвăрт туса пыма тăрăшаççĕ. Августăн 20-мĕш тĕлне район 17.870 гектар тыррине вырса пухнă, 5.972 гектар кĕлтисене кÿрсе капана хывнă, 4.568 гектар тыррине çапнă.

Кĕлтесене кÿрсе капана хывас ĕç Энĕшпуçĕнчи «Аниш», Чупайри «Дружба» колхозсенче организованно пулса пырать. Паянхи кун тĕлне «Аниш» колхоз 800 гектар кĕлтине капана хывнă. «Дружба» колхоз та вырнă тырăсене çийĕнчех капана хывса пырать. Унта алă вĕççĕн çĕклесе кăна 260 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă. Колхозниксем ку ĕçе пысăк тимлĕхпе, юратса тăваççĕ, кунĕн-çĕрĕн ĕçлеççĕ.

Малтикасри «Вутлан», Кивĕ Мăратри Молотов ячĕпе тăракан колхозсем кĕртыррисене кÿрсе капана хывса пĕтерчĕ. «Вутлан» колхозра кĕрхи тырăсене çапас ĕç те вĕçленнĕ.

Авăн çапнă çĕрте МТС-ăн 12 молотилки ĕçлет. Мăнçырмари Молотов ячĕпе тăракан колхозра молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Ĕçе пĕлсе организациленĕ. Норма тăрăх талăкра 12 тонна тырă çапас вырăнне тăтăшах 13,5—14-шар тонна çапаççĕ.

В. ПУЛЬХЕРОВСКИЙ,
ВКП(б) райкомĕн кадрсем тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕ.

Шкул ачисем пучах пухаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. **(Телефонпа).** Районри пур колхозсенче те тенĕ пекех пучахсем пухнă çĕрте кĕçĕн классенче вĕренекенсенчен организациленĕ отрядсем ĕçлеççĕ. «Большевик» колхозра, тĕслĕхрен, 3-мĕшпе 4-мĕш классенче вĕренекенсем пурĕ 52 ача кулленех 15-шер килограмм пучах пухаççĕ. «Красный Октябрь» колхозра та тырă вырма тухнăранпах 32 ача пучахсем пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вĕсем августăн 22-мĕш тĕлне 192 гектар çинчи пучахсене пухса илнĕ. Шмидт ячĕпе тăракан колхозри шкул ачисем те пĕр кун хушшинчех 12 гектар çинчи пучахсене пухса илнĕ

Витесем юсарĕç

ЧКАЛОВСКОЕ. Татмăшри «Восток» колхоз кăçал выльăхсене ăшă та çутă витесенче хĕл каçарать. Çак кунсенче колхоз лаша витисем 2 вите юсарĕ. Ку ĕçре уйрăмах А. Салмин, Ф. Иванов колхозниксем тăрăшса ĕçлерĕç.

П. ГОЛОВИН.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Тырпул тăккаланнине хирĕç Шупашкар районĕнчи колхозсенче мĕнле кĕрешни çинчен

ВКП(б) Обкомĕ тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, ВКП(б) Шупашкар райкомĕ тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешес ыйтăва политикăллă пысăк вырăна хурса хакламан, çавăнпа та районри колхозниксене çак питех те кирлĕ ĕçе тума мобилизацилемен, колхоз председателĕсене пухса ЦК ВКП(б) директивине сÿтсе-явнипех лăпланнă. Шупашкар МТС-ĕн политотделĕ те тăккаланчăксене хирĕç кĕрешес ыйтăва хăйĕн ĕçĕнче политикăллă пысăк вырăна çĕклемен. Районри хаçат хăйĕн страницисенче тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешес ыйтăва çивĕччĕн лартмасть. Районри комсомол, пионер организацисем тата шкулти организацисем вăрçă вăхăтĕнче пысăк вырăн йышăнса тăракан çак ĕçе хутшăнмаççĕ.

Шупашкар районĕнче колхозсен тата МТС-ĕн лашапа ĕçлемелли жнейкисем çумне зерноуловительсем туса лартман, пучахсене кĕреплепе тураса тата алăпа пухас ĕçе организацилемен. Çакна пула чылай колхозсенче тырпулсене вырнă чухне тата авăн çапнă çĕрте пысăк тăккаланчăксем пулаççĕ.

«Актив» колхозра комбайнпа тырă вырнă чухне (комбайнерĕ Столяров) хăмăла çав тери çÿллĕ хăварса (45—50 сантиметр хăварса) вырнă, çавна пула кашни квадратлă метрта 59 пучаха çити тăкăнса юлнă, çакă вăл пĕр гектарта 2,5 центнер тырă çухатни пулать. Лашапа ĕçлемелли жнейкăпа вырнă хыççăн квадратлă метрта 26 пучаха çити тăкăнса юлнă е кашни гектарта 1,3 центнер тĕштырă çухатнă. «Молния» колхозра тырă вырнă чухне кашни гектар пуçне пĕр центнера яхăн тырă тăкăнса юлнă, пăрça 55 килограма çити тăкăнса юлнă. Çак колхозра авăн çапнă чухне тасатман итем çинех кĕлтесене пăрахаççĕ, çавна пула та пысăк çухатусем пулаççĕ. Арпа-хăльчăка тĕплĕн тасатмаççĕ, нумай тырпула арпапа пĕрле тăкса хăварса колхозниксене валеççе параççĕ. «11 лет Октября» колхозра пăрçана пуçтарнă тата çапнă чухне МТС молотилкине лайăх йĕркелесе яман, çавăн пирки ăна арпапа пĕрле тăккаласа хăварнă, çав тăккаласа хăварнă пăрça хисепĕ вăрлăх фончĕ хывмаллăхах пулать.

Çакăн пек фактсем пур пулин те Чăваш АССР Наркомземĕ тырпула тăккаланине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлемест. Халĕ, тырпулăн кашни килограмне çирĕппĕн шута илсе пыма кирлĕ чухне, çакăн пек тăккаланчăксем тунине ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ пачах та юрăхсăр тата преступленилле ĕç тесе хакларĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ хăйĕн решенинче ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарьне Караушев юлташа тата Шупашкар МТС политотдел начальникне Смирнов юлташ, вĕсем тырпулсене тăккаланине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе практикăллă мерăсем йышăнманшăн, асăрхаттарса хăварчĕ; вĕсене районри колхозсенче тырпулсене пухса кĕртнĕ, авăн çапнă, тырă турттарнă чухне тăккаланчăксене хирĕç чăннипех кĕрешес ĕçе организацилеме хушрĕ. Тырпулсене тăккаласа айăпа кĕрекен çынсене, колхозлă пурлăха çаратакансем вырăнне хурса, судпа ответ тыттарма хушрĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Наркомзема Малов юлташа, Шупашкар райсовет исполкомне, ВКП(б) райкомне, МТС директорĕпе политотдел начальникне çакăн пек тума хушрĕ:

а) мĕнпур комбайнсем, жнейкăсем тата сенокосилкăсем çумне халех зерноуловительсем туса çакмалла, машинăсемпе вырнă чухне хăмăла çÿллĕ хăварни пулмалла мар;

б) пур колхозсенче те тырпула машинăпа вырнă хыççăн пучахсене кĕреплепе тата алăпа пухса илмелле, çак ĕçе пионерсемпе шкул ачисен отрячĕсене хутшăнтармалла. Ачасене ĕçкунĕсем çырса парас ĕçе пухнă пучахсен йывăрăшне шута илсе туса пымалла;

в) тĕплĕн тасатнă итемсем çинче çеç авăн çапмалла, кĕлтесем ăшĕнче çапăнман пучахсем юлни пулмалла мар;

г) тырăсене тăпачăпа çапнă чухне кĕлтесене салатса пăрахмалла, çапăнман пучахсем юлни пулмалла мар;

д) çапнă тырра итемсем çинче, усă вырăнта тата хуралсăр хăварма колхозсене чармалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ сĕннĕ тăрăх, колхозсенче тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе ĕçлеме опытлă тата авторитетлă колхозниксемпе колхозницăсенчен обществăллă инспекторсем уйăрмалла, çав инспекторсем ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатас енĕпе панă сĕнÿсене тата кăтартусене колхозсен тăтăшах пурнăça кĕртсе пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Çĕрĕç Халăх Комиссарне Малов юлташа колхозсенче тырпула тĕрĕс учета илсе пынине тата приходланине, тырă вырас, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçре пур çĕрте те тăккаланчăка хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе мĕнле мерăсем йышăннине хытă сăнаса тăма хушрĕ.

Обком бюровĕ республикăри тата районсенчи хаçатсен редакторĕсене тăккаланчăка хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен опытне хаçат страницисенче анлăн çутатса пыма, тырпул тăккаланнине хирĕç кĕрешес ĕçе организацилемен руководительсене, ялхуçалăх ĕçĕсене начар пахалăхпа туса пыракансене тăрă шыв çине кăларса пыма хушрĕ.

Тырă памалли графика район тултарса пымасть

ЙĔПРЕÇ, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Районра государствăна график тăрăх тырă пама тытăннăранпа икĕ пилĕккунлăх иртрĕ. Малтанхи пилĕккунлăхра çак ĕç анлăн пулса пычĕ: государствăна 2.047 центнер тырă парса, район пилĕккунлăхри графика 170 процент тултарчĕ. «Красный Октябрь» колхоз графика 425 процент, «Коминтерн» колхоз—178 процент, «Большевик» колхоз—135 процент тултарчĕç. Пĕрремĕш пилĕккунлăхра график ытти чылай колхозсенче те ăнăçлăн пурнăça кĕрсе пычĕ.

Иккĕмĕш пилĕккунлăхра хăвăртлăхсене ÿстерсе пырса татах та лайăхрах ĕçлемеллеччĕ. Анчах ĕç урăхла пулса тухрĕ. Пĕрремĕш пилĕккунлăхра графика районри 21 колхоз тултарнă пулсан, иккĕмĕш пилĕккунлăхра тырă памалли графика 11 колхоз кăна тултарчĕç. Пĕтĕм район государствăна тырă памалли графика иккĕмĕш пилĕккунлăхра 48,5 процент кăна тултарнă. Государствăна тырă пама пачах та тытăнман колхозсем те пур-ха. Йĕпреçри колхозăн (председателĕ Иванов) государствăна 105 центнер тырă памалла пулнă, анчах вăл пĕр центнер та паман. Колхозăн тырă леçме пĕтĕмпе те пĕр километр çеç каймалла, хатĕрлев пункчĕ юнашарах. Çапах та колхоз председателĕ Иванов юлташ «лашасем çитмеççĕ» тесе ларать. Çав вăхăтрах колхозăн 12 лаши пушар дружининче кунĕ-кунĕпе ĕççĕр тăраççĕ. Çак лашасемпе тырă турттарнă çĕрте усă курма май пур пулин те, колхоз председателĕ çакна тума шутламасть.

Чылай колхозсенче государствăна тырă парас ĕç вĕсем транспорт бригадисем туман пирки начар пулса пырать. «Социализм», «Красный партизан», «Трактор» «Осоавиахим», «Орел» колхозсем тырă пама халĕ те тытăнман. Транспорт бригадисене туса йĕркелеменни çак колхозсен ĕçĕнчи чăрмав пулса тăрать. «Осоавиахим» колхозра вунă кун каяллах государствăна пама тырă çапса хатĕрленĕ, анчах колхоз председателĕ Яковлев лаша уйăрса паман пирки вăл тырра халиччен те хатĕрлев пунктне леçмен. Çакăн пек сăлтавсене пула районри 7 колхоз ку таранa çитсе государствăна пĕр центнер та тырă паман-ха.

Хăшпĕр колхозсенче транспорт бригадисене урăх ĕçе ĕçлеме куçарнисем час-часах пулаççĕ. Буденный ячĕпе тăракан, «МОПР» тата ытти колхозсенче транспорт бригадисене халĕ кĕракинче ĕçлеттереççĕ. Çав вăхăтрах ку колхозсем малтанхи пилĕккунлăхра та тырă памалли графика тултарайман пулнă.

Районра пример кăтартса ĕçлекен колхозсем те сахал мар. Сăмахран, Димитров ячĕпе тăракан колхозра транспорт бригадине яланлăхах çирĕплетнĕ, ăна 9 лаша панă, бригадăна комсомолец И. Евграфов ертсе пырать. Транспорт бригади лайăх ĕçленине пула, колхоз малтанхи пилĕккунлăхра графика 206 процент тултарнă, иккĕмĕш пилĕккунлăхра та пĕтĕмпех тултарчĕ. Çакăн пек ĕçлекен колхозсен примерне районри ытти колхозсенче те анлăн сарас пулать. Анчах çакă курăнмасть-ха. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ тырпул хатĕрлес ĕçе хăвăртлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Кĕрхи тырăсене акаççĕ

ÇĔРПУ, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Тĕнсĕр ялсоветĕнчи «Кульмет» колхозăн план тăрăх кĕрхи тырăсем 142 гектар çине акмалла пулнă. Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсен çырăвне сÿтсе-явнă хыççăн, унта кĕрхи тырăсем акмалли лаптăка 39 гектар чухлĕ пысăклатнă. Колхоз кĕракине августăн 24-мĕшĕнче вĕçлет.

А. ФЕДОРОВ.

Малта пыракансем пек ĕçлемелле

ТĂВАЙ. **(Телефонпа).** Августăн 21-мĕш тĕлне МТС комбайнсемпе 1.000 гектар ытла тырă пухса кĕртнĕ. Ку ĕçре уйрăмах комбайнер-комсомолец К. Антонов юлташ лайăх ĕçлерĕ. Вăл хăйĕн комбайнĕпе тырă вырас плана кĕрхи тырăсене вырнă çĕртех пурнăçларĕ, 110 гектар вырăнне 116 гектар пухса кĕчĕ. Августăн 18-мĕшĕнче вăл 25,5 гектар пухса кĕрсе, ĕç нормине виçĕ хут ытла тултарчĕ. Çав кунхи ĕçĕшĕн Антонов юлташ 97 тенкĕ укçа, 33 килограмм тырă илчĕ.

Çак çĕнтерĕве Антонов юлташ мĕнле турĕ-ха? Вăл тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне туйса ĕçлерĕ, хаклă вăхăтăн кашни минутипе туллин усă курчĕ. Трактористка Анна Каранова юлташ комбайн туртакан трактора виççĕмĕш хăвăртлăх çинче ĕçлеттерчĕ.

Комбайнер Антонов, трактористка Карзанова юлташсем кăçал 300 гектар тыррине пухса кĕртме сăмах панă, ăна вĕсем пурнăçлаççех. Антонов юлташ халĕ «Красное Сормово» колхоз кирĕнче ĕçлет. Ĕнер вăл 10 гектар çинчи сĕлĕ вырса пухрĕ.

З. Петров, М. Семенов комбайнерсем те кăçал 83-шер гектар пухса кĕчĕç.

Анчах начар ĕçлекенсем çинчен те калас пулать. Ĕç çине çиелтен пăхнă тата комбайнсене ĕçе тухма начар хатĕрленĕ пирки, комбайнер Хайзуков кăçал пурĕ те 8 гектар, комбайнер М. Сорокин 10 гектар çеç вырса пухнă. Комбайнер С. Васильев та тухăçсăр ĕçлет, вăл пурĕ те 46 гектар çинчи тырăсене çеç вырса пухнă.

Ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерсе, çак комбайнерсен малта пыракансем пек ĕçлеме тăрăшмалла.

В. ЧЕРНОВ,
Тăвай МТС политотделĕн начальникĕ.

Сеялкăсене туллин ĕçлеттермелле

СĔНТĔРВАРРИ, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсем кĕрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăварма чĕнсе каланине районри колхозсенче пысăк активлăхпа сÿтсе-яваççĕ. Колхозниксен аслă пухăвĕсем кĕрхи тырăсем акмалли çĕрĕн лаптăкне аслăлатма йышăнаççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз планран ирттерсе 65 гектар, «Красный Вольгарь»—36 гектар, «Верный путь», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем 25-шер гектар акма йышăннă.

Район августăн 22-мĕш тĕлне кĕрхи тырăсене акас плана 26 процент тултарнă. Ака ĕçĕсем уйрăмах «Шордан», «Октябрь», Маклашкинăри «Осоавиахим», Макаçкассинчи «Хĕрлĕ Çар» колхозсенче ăнăçлăн пулса пыраççĕ. «Хĕрлĕ Çар» колхозри сеяльщиксем Нефедовпа Ильин юлташсем нормăна 4-шар гектар акас вырăнне кашни кун 4,5—5-шер гектар акаççĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, район кĕракинче сеялкăсемпе туллин усă курма тытăнман-ха. Августăн 22-мĕш тĕлне акнă 2.004 гектартан сеялкăсемпе 1.088 гектар акнă. «Верный путь» колхозра сеялкăсене кирлĕ пек ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ. Унта 3 сеялкăпа 4—5 кун хушшинче те 15 гектар çеç акнă.

Н. ПЕТРОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Планран ирттерсе—вуншар гектар

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 22-мĕш. **(Телефонпа).** Тула облаçĕнчи «Заря» ялхуçалăх артелĕн членĕсен çырăвне районри колхозсенче пысăк çĕкленÿпе сÿтсе-яваççĕ. Колхозниксем, çак чĕнĕве пĕр кăмăлпа ырласа, кĕрхи тырăсем акмалли çĕр лаптăкне планпа кăтартса панинчен чылай аслăлатма йышăнаççĕ. «Двигатель революции», «Янга Турмыш» колхозсем планран ирттерсе 70-шер гектар, «Красный Октябрь», «Новая жизнь» колхозсем—23-шер гектар ыраш акаççĕ. Район планран ирттерсе 1.110 гектар ыраш акса хăварать.

Колхозсенче халĕ хĕрсех кĕрхи тырăсене акаççĕ. Августăн 20-мĕш тĕлне районĕпе пурĕ 3.538 гектар акнă, çакă вăл кĕртыррисене акас планăн 31,4 процентĕ пулать. «Ударник», «Искра» колхозсем кĕрхи тырăсене акас плана пĕтĕмĕшпех тултарнă. «Ударник» колхоз кĕртыррисене йăлтах сеялкăсемпе акнă. Сеялкăсене «Трактор», «Мурат» колхозсенче те туллин ĕçлеттереççĕ.

Б. МУСТАФИН,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Августăн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсем нимĕçсен Варшава хулинчи, Хĕвелтухăç Пруссипе Верхняя Силезин хăшпĕр районĕсенчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă

Августăн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ Варшава хулинче, çавăн пекех тата Хĕвелтухăç Пруссипе Верхняя Силезири чылай районсенче нимĕçсен çарпа промышленность объекчĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнă хыççăн Варшава хулинче нумай çĕрте пушарсем тухнă, вĕсенчен 14 çĕрте вăйлă пушарсем пулнă. 19 взрыв пулнине палăртнă, вĕсенчен 12 взрывĕ Виленски вокзал районĕнче тата 3 взрывĕ Главнăй вокзал территоринче, 2 взрывĕ хĕçпăшал тăвакан мастерскойсемпе боеприпассен склачĕн районĕнче, пĕр взрывĕ Çĕнĕ порт территоринче пулнă.

Хĕвелтухăç Пруссипе Верхняя Силезири районсенче нумай çĕрте пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнине палăртнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă.

Турци посолне Д. Ачикалын господина В. М. Молотов юлташ йышăннă

Августăн 21-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Турци республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй çĕнĕ посолне Д. Ачикалын господина йышăннă.

ВЛКСМ Обкомĕнче

Саратов облаçĕнчи комсомолецсен пуçарăвне ырласа, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1942 çулти августăн 30-мĕшĕнче государствăна тырă парас тĕлĕшпе массăллă воскресник туса ирттерме йышăннă.

ВЛКСМ райкомĕсене çак воскреснике ирттермешкĕн тĕплĕн хатĕрленме хушнă. Колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе авăн çапас ĕçе организацилемелле, транспорт, михĕсемпе пăналăксем хатĕрлемелле, туртăм вăйĕ çителĕклĕ таран тупас пулать, тырă турттарас ĕçре учрежденисемпе предприятисен машинисемпе усă курмалла, вĕсемпе ĕçлеме çамрăксен бригадисене уйăрмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 21-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Августăн 21-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри, **Пятигорскран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата **Краснодартан** кăнтăртарахри районсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлтăр улшăнусем пулман.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн минлă заградительне тата хуралра çÿрекен икĕ карапне путарнă.

Пирĕн карап Балти тинĕсĕнче нимĕçсен 15 пин тонна водоизмещениллĕ танкерне путарнă.

* * *

Августăн 20-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 18 танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 140 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитлă артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн хаяр атакисене сирсе-сирсе пынă. Н-ски чаçри боецсем нимĕçсене хирĕç пырса çапса 450 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 4 орудии, 162 винтовка, 2 пин гранатă тата 15 пин патрон тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пирĕн гвардейски чаçăн участокĕнче противник атакăна танксен пысăк ушкăнĕсене кĕртсе янă тата танксене авиацирпе пулăшса пынă. Пирĕн гвардеецсем гитлеровецсен мĕнлур атакисене сирсе пăрахнă, нимĕçсен 40 çити танкне çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирне тăшмансен 100-шер виллисем выртса юлнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем темиçе хутчен те атака тунă, анчах вĕсен атакисене вĕсене пысăк çухатусем тÿстерсе пурне те сирсе пăрахнă. Н-ски подразделенин участокĕнче кăна нимĕçсен 7 танкне тата 300 ытла гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противник пысăк вăйсене атакăна кĕртсе янă, вĕсене 100 ытла танк пулăшса пынă. Нимĕç танкĕсен пысăк мар ушкăнĕ çеç пирĕн позицисем витĕр шăтарса кĕме пултарнă. Противникăн пехотине уйăрса танкĕсенчен татса илнĕ. Противникăн çав группировкине пĕтерсе тĕкас тĕлĕшпе пирĕн чаçсем халĕ вăйлă çапăçусем туса пыраççĕ.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра хаяр çапăçусем пынă. Ковалев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 2 пин ытла салтакĕне офицерне, 5 танкне, 2 бронемашинине, 18 грузовой автомашинине, 14 çăмăл машинине пĕтерсе тăкнă. Участоксенчен пĕринче вăйлăн çапăçнă хыççăн пирĕн чаçсем çĕнĕ позицисем патне чакнă.

* * *

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вырăнта пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сирсе-сирсе пынă. Пĕр стрелковăй чаçри боецсем пирĕн оборонăн малти линийĕ ăшне çĕмĕрсе кĕнĕ 70 нимĕç автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче Донăн хĕвеланăç енче халĕх пурăнакан пунктра урамсенчи çапăçусем пынă. Гитлеровецсем ирхине ирех икĕ батальонпа атака пуçласа янă пулнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Тăшманăн 200 çити салтакĕпе офицерĕ вилсе пĕтнĕ.

* * *

Карели фронтĕнче противникăн 5 самолечĕ пирĕн юханшыв урлă каçмалли вырăнсене çĕмĕрме хăтланнă. Тăшмана советăн 5 истребителĕ атакăланă. Пуçланса кайнă сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем — Бубанов, Князев тата Клименко юлташсем кашниех противникăн пĕрер самолетне персе ÿкернĕ. Унсăр пуçне Клименкопа Кузнецова юлташсем иккĕшĕ пĕрле тăшманăн татах тепĕр самолетне персе ÿкернĕ. Пирĕн истребительсем пĕри те сиенленмен.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен Б. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕçсен 315 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, чугунçула 150 метр тăршшĕ пăсса пĕтернĕ, пĕр паровоза, боеприпассем турттарса пыракан 16 вагона тата горючи турттарса пыракан икĕ цистернăна ÿпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 98-мĕш пехотнăй дивизин 282-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Бернгардт Вонс çапла пĕлтернĕ: «Июнь уйăхĕнче эпĕ 98-мĕш маршевăй батальонпа пĕрле фронта килсе çитрĕм. Пирĕн пата дивизи командирĕ Карейс килчĕ те сăмах тухса каларĕ. 98-мĕш дивизи йывăр çухатусем тÿсрĕ, ротăсенче нумайĕшĕнче 15—20-шер çын çеç юлнă. Халĕ ĕнтĕ çĕнĕ вăй хушса параççĕ, çапла вара дивизи каллех вăрçă ĕçĕсене кутшăнать, терĕ вăл. Вăл каланине салтаксем çав тери тĕксĕмĕн тата хурлăхлăн итлесе тăчĕç. Вĕсене кунта вилĕм тупма илсе килнине салтаксем кашниех пĕлсе тăраççĕ. Кам кунтан çăлăнса тухма пултарнине пĕр шуйттан çеç пĕлет пулĕ. Эпĕ телейлисенчен пĕринĕ пултăм, тепĕр уйăхранах тыткăна лекрĕм те халĕ ĕнтĕ вăрçă пĕтессе çеç кĕтсе пурăнатăп».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсемпе командирсене çав тери тискеррĕн асаплантарнисем çинчен Калинин фронтĕнчи боецсен группи акт çырнă. Актра çапла каланă: «Дружево тата Шалы ялĕсенчен инçех мар вырăнта совет боецĕсен 17 виллине тата пĕр хĕрарăмăн виллине тупнă, çав çынсене нимĕçсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ пулнă. Вĕсене уйăрса палласа илме май çук. Виллĕсем çинче пуринче те çав çынсене этемле мар тискеррĕн асаплантарнин йĕрĕсем пур. Тыткăна илнĕ красноармеецсемпе командирсене гитлеровецсем куçĕсене чике-чике шăтарнă, аллисемпе урисене касса татнă». Акт çине военфельдшер Бошева, батальонăй комиссар Кулаков, кĕçĕн политрук Коналов, кĕçĕн сержант Рогачев алă пуснă.

Августăн 22-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿрен

Августăн 22-мĕш ыран тепĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри, **Пятигорскран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри тата **Краснодартан** кăнтăрарахри районсенче çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетская районĕнче пирĕн часть нимĕçсем çине сасартăк пырса тапăннă. Штык вĕççĕн тытăçса хаяррăн çапăçнă хыççăн противник каялла чакнă, çапăçу хирĕнче 200 виле, 2 оруди, 8 пулемет, боеприпассем тиенĕ 13 автомашина тата радиостанци çухатса хăварнă. Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противникăн наступлени туса килекен войскисене хирĕç вăйлă çапăçусем пынă. Н-ски подразделени тăшманăн виçĕ атакине сирсе янă. Гитлеровецсене 250 çынна ытла, пĕр танк тата 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем пирĕн боецсене флангран пырса çапма хăтланнă, анчах пулемет засади çине пырса кĕнĕ, вĕсен тепĕр 60 автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç хĕрÿллĕ çапăçусем туса пынă. Юлашки кунсенче çак участокра нимĕçсем пысăк çухатусем тÿснĕ. Вĕсем васкасах резервсене илсе пыраççĕ те çапăçăва кĕртсе яраççĕ. Нимĕçсен 50 танкĕ тата пехоти Н-ски чаçăн боецĕсем хÿтĕлекен участока атакăланă. Çапăçу темиçе сехет хушши пынă. Пирĕн боецсем вырăнтан тапранмасăр хирĕç тăрса гитлеровецсен атакине сирсе янă. Нимĕçсен 3 танкне арканă тата 9 танкне вут тивертсе çунтарса янă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăрарахри районра пирĕн чаçсем оборонăллă çапăçусем туса пынă. Нестеренко юлташ командир пулса тăракан чаçăн минометчикĕсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла, 12 танк тата нумай автомашинăсем пĕтерсе тăкнă. Пирĕн авиаци активлăн çапăçать. Н-ски чаçăн летчикĕсем пиллĕк кун хушшинче нимĕçсен 34 самолетне персе антарнă. Летчик-лейтенант Норжинский пĕр кун хушшинче нимĕçсен 3 бомбардировщикне персе ÿкернĕ.

Пятигорскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн малалла кĕрсе кайнă отрячĕсене сăртсем хушшинче хупăрласа илнĕ те пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем оборонăн çĕнĕ рубежне чакнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан пĕр вырăнтан нимĕçсене хĕссе кăларнă. Çапăçу вăхăтĕнче гитлеровецсене темиçе çĕр çынна пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 6 танкне арканă. Арсентьев юлташăн батарейи тăшманăн 2 танкне арканă. Кондратенко юлташăн артиллери батарейи, наступлени тăвакан пехотăпа пĕрле пырса, тăшманăн 4 дзотне çĕмĕрнĕ, противникăн миномет батарейине тата 3 пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Темиçе кун хушшинче гитлерла бандитсем Старый Оскол хулинчи темиçе çĕр çынна асаплантарса, персе тата çакса вĕлернĕ. Нимĕç çынçиенĕсем 36 çемьене пĕтĕмпех касса вакланă. Гитлеровецсем асаплантарса вĕлернисем хушшинче Анастасия Петровна Изюмова тата унăн виçĕ çулхи внучки Лида пулнă. 5-мĕш класра вĕренекен ученикcене—Паша Курносовпа Коля Васильева вĕсем тепĕр яла каймалли çула нимĕçсене кăтартма килĕшменшĕн çакса вĕлернĕ.

Ют çĕршывсенче

Англипе Америка авиацийĕ Çурçĕр Франци çине вĕçсе пырса тапăннă

ЛОНДОН, августăн 21-мĕш. (ТАСС). Лондонра авиаци министерствипе Америка çарĕн штабĕ пĕрле коммюнике пичетлесе кăларнă, унта çапла каланă: паян каçхине Англипе Америка самолечĕсен нумай хисеплĕ эскадрильисем, çавăн пекех тата доминионсемпе союзниксен самолечĕсем Çурçĕр Франци çине вĕçсе кайса тапăннă. Çав операцисем вăхăтĕнче Америка çарĕн «Летающая крепость» йышши бомбардировщикĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Амьен çине вĕçсе кайнă, унта чугунçул сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çак вĕçевре пулнă самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Дьепп районне кайса тапăнни çинчен тĕплĕн пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 21-мĕш. (ТАСС). Комбинированнăй вăйсен штабĕ, Дьепп районне кайса тапăннин итогĕсем çинчен коммюнике пичетлесе кăларнă, унта çакна кăтартса панă: тапăнăвăн тĕллевĕ — çыранри районăн оборони мĕнле пулнине тĕпчесе пĕлесси, Германин батарейисене тата радиостанцине пĕтерсе тăкасси, противникăн чĕрĕ вăйĕпе унăн хĕçпăшалне пĕтерсе тăкасси тата салтаксене тыткăна илесси пулнă. «Çак рейд,—тесе кăтартса панă коммюникере, — разведка тумалли пысăк операци пулса тăчĕ тата пирĕн наступлениллĕ политикăн кирлĕ элеменчĕ пулса тăрать».

Противник вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, войскăсемпе чылай танксене Дьепп районĕнчи çыранри 6 пунктра антарнă. Вĕсем икĕ батарейăна тата радиостанцине пĕтерсе тăкма, противника йывăр çухатусем кÿме, икĕ пысăк мар суднăна путарма тата чылай салтаксене тыткăна илме пултарнă.

Пуринчен ытла канадецсенчен тăракан десант войскисем çыранра 9 сехете яхăн пулнă, кун хыççăн вĕсене çар карапĕсем çине илнĕ. Танксем хулана çĕмĕрсе кĕме пултарнă, войскăсем каялла таврăнас умĕн вĕсене приказпа килĕшсе пĕтерсе тăкнă. Карапсене тата çырана аннă войскăсене Англипе Америка авиацийĕ, союзниксен самолечĕсем, çавăн пекех тата кĕрешекен Францин эскадрильисем хăватлă пулăшу панă. Рейд вăхăтĕнче сывлăшра халиччен пулман пек вăйлă çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçу вăхăтĕнче оккупациленĕ Францири, Голландири, Бельгири мĕнпур районсенчи авиацие нимĕçсен ирĕксĕрех пулăшма чĕнсе илмелле пулнă.

Англин тинĕс-çар вăйĕсем чылаях пысăк çухатусем тÿснĕ, вĕсен десантнăй баржăсем чылай пĕтнĕ тата «Беркли» эсминеца пысăк сиен кÿнĕ пирки путарса хăварма лекнĕ. Карап экипажĕн пысăк пайне çăлса хăварнă.

Войскăсене çырана антарма тытăнас умĕн Германин хĕçпăшалланнă тральщикне путарнă, теприн çинче пушар тухнă.

Çыранран тухма пултарнă войскăсене пурне те карапсем çине илни паллă пулсан кăна çар карапĕсем Франци çыранĕнчен уйăрăлса кайнă.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: çак «пĕчĕк тапăнăвăн тĕп задачисене пурнăçа кĕртнĕ», «нимĕçсен çыранри оборони питех те çирĕп тесе калани суя пулнине тăрă шыв çине кăларнă, çавăн пекех тата сывлăшра пуç пулса тăрасси çинчен Гитлер мухтаннине те тăрă шыв çине кăларнă».

Дьепп районне пырса тапăнни çинчен гитлерла пропаганда жуликла суйса пĕлтерет

ЖЕНЕВА, августăн 20-мĕш. (ТАСС). Германи пропаганди союзниксем Дьепп районне пырса тапăнни çинчен вăйлăн шавлама тытăннă, вăл çав операцин характерне пур майсемпе те суйса кăтартма тăрăшать. Çапла, сăмахран, Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Дьеппра «союзниксем иккĕмĕш фронта уçма хăтланнă» иккен, «сăмах чăннипех тапăнса кĕресси çинчен пынă» иккен.

Берлинăн çак суя хыпарĕсене хирĕçлесе, Швейцари хаçачĕсем Рейтер агентстви пичетлесе кăларнă иккĕмĕш коммюникене илсе кăтартаççĕ, унта Дьепп районне пырса тапăнни иккĕмĕш фронт уçни пулман тесе пĕлтернĕ. Çапла пулин те Германи пропаганди: «çак рейд тапăнса кĕме хăтланни пулнă, ăна сирсе пăрахнă», тесе сăмах сарать. Рейтер агентстви пичетленĕ иккĕмĕш коммюникере çапла кăтартса панă: союзниксен рейдне малтанах палăртса хунă вăхăтра туса ирттернĕ, тенĕ.

Женевăна килекен пĕлтерÿсем кăтартса панă тăрăх, Германи пропаганди Дьеппри операцине пур майсемпе те пысăклатса кăтартма хăтланать, çавăн пекех Германи «укрепленийĕсен хăвачĕ» çинчен тата «союзниксем пысăк çухату тÿсни» çинчен нумай çырать. Германин информаци бюровĕ Ла-Манш çыранĕнчи укрепленисене Зигфрид линийĕпе танлаштарасси патнех çитнĕ. «Ла-Манш çыранĕсем питех те çирĕппине» тата «тапăнса кĕме кирек мĕнле хăтланни те шанчăксăр пулассине» кăтартса пама пур майсемпе те тăрăшса, геббельсла пропаганда иккĕмĕш фронт уçăлассинчен гитлеровецсем хăранине уççăнах кăтартса парать.

ДЕ ГОЛЛЬ ГЕНЕРАЛ ЧЕРЧИЛЛЬПЕ КУРНĂÇСА КАЛАÇНИ

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть де Голль генерал Каирта Черчилльпе курнăçса нумайччен калаçнă. Вĕсем пĕр-пĕринпе питĕ те чĕререн калаçнă, вĕсем Англипе Франция Сывăхри Хĕвелтухăçĕнче пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калаçнă.

Америка авиацийĕн ĕçĕсем

Америкăри сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Америкăн вăтам бомбардировщикĕсем Мерса-Матрух çине пырса ăнăçлăн атакăланă. Йывăр бомбардировщиксем бомба пăрахса Вăтаçĕр тинĕсĕнче противникăн суту-илÿ карапне çунтарса янă, çавăн пекех тата Тобрукри порт çине бомбăсем пăрахнă. Самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă. (ТАСС).

Тĕнĕл держависен çыннисене Бразилире тытса чарнă

НЬЮ-ИОРК, августăн 21-мĕш. (ТАСС). Тĕнĕл держависен подводнăй лодкисем Бразилин 5 пароходне путарни Бразилири тата Америкăри ытти çĕршывсенчи халăха тарăхтарса янă. Сан-Сальвадор, Белем тата ытти хуласенче массăллă демонстрацисем пулса иртнĕ. Демонстрантсем Америкăри мĕнпур çĕршывсене пĕрлештерсе тĕнĕл держависене хирĕç кĕрешме ыйтнă.

Бразилири «Коррейо да Маньян» хаçат: «тĕнĕл держависем, чăннипе илсен, Бразилие хирĕç вăрçă пуçларĕç ĕнтĕ», тесе çырать.

Кăнтăр Америкăри пĕтĕм пичет çырусем пичетлет, вĕсенче тĕнĕл держависен пиратла ĕçĕсемшĕн Бразили отпор парассине шанса тăни çинчен каланă.

Рио-де-Жанейро хулинче Германин подводнăй лодки Бразилин улттăмĕш пароходне путарни çинчен ятарласа пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă.

Çакна май Бразили президенчĕ Варгас пур нимĕçсене те заложник вырăнне тытса чарма распоряжени панă, çав нимĕçсем çывăх вăхăтрах Германие тухса каймалла пулнă. Францин оккупациленĕ зонинче Бразилин 25 çыннине тытса чарнине хирĕç ответлесе, Варгас тĕнĕл держависен пур çыннисене те тытса чарма хушнă.

Сметс хăй Черчилльпе калаçни çинчен

ЛОНДОН, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кăнтăр Африка союзĕн премьер-министрĕ Сметс генерал Каирта Черчилльпе курнăçса калаçнă. Сметс ун çинчен çапла каланă: çав калаçура эпир вăрçă ларутăрăвне пур енчен те тĕплĕн сÿтсе яврăмăр тата мĕнпур тĕп ыйтусем çинчен те калаçрăмăр, тенĕ. «Египетра калаçнисем тата унтан кайран Мускавра калаçнисем нумая пыракан результатсем парĕç», тенĕ юлашкинчен Сметс.

Швецин „Лиллевальк“ ятлă пароходне путарни

СТОКГОЛЬМ, августăн 19-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 18-мĕшĕнче Швецин территорине кĕрекен шывсенче Хенделер çывăхĕнче (Вестервикран кăнтăралла) икĕ торпедăпа шведсен «Лиллевальк» ятлă пароходне путарнă. Ку пароходăн водоизмещенийĕ 8.470 тонна пулнă. Малтанхи сведенисем тăрăх, пароход командинчен капитанпа пĕрле 33 çын пĕтнĕ, 7 çын çăлăнса юлнă, вĕсене Оскарсхамна илсе пынă.

Великобританин премьер-министрĕ господин У. Черчилль Мускавра пулни

Кинохроникăн ятарласа кăларнă картини

Паян Мускаври кинотеатрсенче Кинохроникăн центральнăй студийĕ ятарласа кăларнă картинăна — «Великобританин премьер-министрĕ господин У. Черчилль СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕпе И. В. Сталинпа калаçни» ятлă фильма кăтартма пуçлаççĕ.

Ку картинăра Великобританин премьер-министрĕ господин У. Черчилль, США Президенчĕн представителĕ господин Гарриман, имперски генеральнăй штабăн начальникĕ сэр Аллан Брук, Великобританин Ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн яланхи заместителĕ сэр Александер Кадоган тата господин Черчилльпе пĕрле килнĕ ытти çынсем Мускава çитнине кăтартнă.

Господин Черчилльпе господин Гарриманăн Мускава çитсен тунă заявленийĕсене, кинопленка çине çырса илнĕскерсене, картинăна кĕртнĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Великобританин премьер-министрĕпе господин У. Черчилльпе тата США Президенчĕн представителĕпе господин Гарриманпа тĕл пулнипе те картинăна кĕртнĕ.

Фильмра çавăн пекех тата господин У. Черчилльпе господин Гарриман Мускавран Лондона тухса кайнине кăтартнă. (ТАСС).

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ФАШИСТСЕН РАЗВЕДЧИКНЕ ТЫТНĂ

Ирхине ялсоветне пĕр лейтенант — Хĕрлĕ Çар летчикĕ пырса кĕнĕ. Çак çын хăйĕн документĕсене кăтартнă та, вăрттăн канмашкăн тата йĕпеннĕ тумтирсене типĕтсе илмешкĕн ун валли хваттер тупса пама ыйтнă.

Халапланă чух çак летчик çав таврари хăй кĕрсе тухнă ялсен ячĕсене пăтраштарса каласнă. Летчикăн çак çитменлĕхне ялсовет секретарĕ асăрхать. Ялсовет секретарĕн пуçне летчик çинчен усал шухăшсем пырса кĕреççĕ. Вара вăл çав таврана асăрхаса тăракан пост начальникĕ патне каять те летчик çинчен хăйĕн шухăшĕсене каласа парать.

Летчике тĕрĕслеççĕ. Хăйхи «лейтенант» çĕрле нимĕçсен самолечĕ çинчен сиксе аннă фашистсен разведчикĕ пулни паллă пулать. (ТАСС).

ФРОНТОВИКСЕМ ВАЛЛИ ÇЫРЛАСЕМ ПУХАÇÇĔ

Ямало-ненецки наци округĕн Пуровски районĕнчи Тарко-Салецентр ялĕнчи хĕрарăмсем фронтовиксем валли кашниех 30-шар килограмм çырла пухса пама пулнă. Канушина, Лисина, Безукладникова юлташсем тата ыттисем те нумайĕшĕ хăйсен сăмахне пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ. Халĕ вĕсем çĕнĕрен татах та 20-шер килограмм çырла, 50-шар килограмм кедр мăйăрĕ пухса пама пулнă. Вĕсен пуçарăвне пĕтĕм районĕпех хаваслăн йышăнса илнĕ.

(ТАСС).

Мучи мунчи

(К а л а в)

Икĕ кун, икĕ çĕр пĕр лăпланмасăр хĕрÿ çапăçу пычĕ. Малтан фашистсем пирĕн çине тапăнса кĕчĕç, унтан эпир вĕсене хĕстерсе çитертĕмĕр; чăтса тăраймарĕç, каялла чакрĕç. Темиçе эрне хушши фашистсен аллинче пулнă чугунçул станцийĕ каллех пирĕн алла куçрĕ.

Станцине эпир, автоматчик-разведчиксем, пуринчен малтан пырса кĕтĕмĕр. Станци пуша, унта пĕр чĕрĕ чун та курăнмасть. Фашистсем çакăн пекех пĕр çын хăвармасăр вĕлерсе пĕтернĕши? — тесе шухăшлатпăр. Станцири çуртсене кĕрсе пăхатпăр, вĕсенче те никам та çук. Станцире йытă-кушаксем те курăнмаççĕ, вĕсем те тăрса тарса пытаннă.

— Юлташсем, ав унта пуçă пур, пырăр-ха, шыв ăсса килĕр. Апат пĕçерсе çиме вăхăт, — терĕ сержант Малов.

Икĕ красноармеец Сидоровпа Яковлев котелоксем илчĕç те шыв ăсма утрĕç.

— Астăвăр, шыв ăсиччен малтан лайăх асăрхаса пăхăр, фашистсем шыва эмел пăрахса хăварман-и, — тесе асăрхаттарчĕ Малов.

Сидоровпа Яковлев пуçă патне çитсенех:

— Эй, — кăшкăрчĕç харăс.

— Мĕн пулнă? Мĕн пур? — чупса çитрĕç ытти юлташсем.

Пăхатпăр: пусăра пĕр çын пуçхĕрлĕ çакăнса тăрать.

— Хăвăртрах туртса кăларăр. Тен чĕрĕ пулĕ, — тесе хушать Малов.

Красноармеецсем вĕренрен ярса тытса пусăри çынна сĕтĕрсе кăларчĕç. Çынни ватă хĕрарăм. Вилнĕ. Пуçхĕрлĕ çакăнса тăнипе кăвакарса кайнă.

— Ал тымарне тытса пăхăр-ха, тен вилмен! — тет сержант Малов.

Яковлев хĕрарăмăн аллинчен тытса пăхать:

— Çук, тымарĕсем тапмаççĕ.

Пусса çĕнĕрен пăхатпăр, унта тепĕр çын вилли выртать.

— Ых, йытăсем, пирĕн çынсене епле асаплантарса пĕтереççĕ, — тесе тарăхаççĕ юлташсем.

Эпир çапла калаçса тăнă тĕле пирĕн пата пĕр старик утса пычĕ. Вăл шурă сухаллă, куçĕсем хĕрелсе тăраççĕ.

— Кам эсĕ? Ăçти çын пулатăн? — ыйтатпăр старикрен.

— Эпĕ? Эпĕ кунти çын. Станцире сторож пулса ĕçлесе пурăнаттăм. Манăн хушамат Савкин, ятăм — Ефим. Ку карчăк — манăн карчăк. Ăна фашистсем ман пирки çапла мĕшкăлласа пуçхĕрлĕ çакса вĕлерчĕç, — тесе пĕлтерчĕ старик.

— Мĕншĕн санăн пирки карчăккун вилмелле пулчĕ? — тесе ыйтатпăр.

Старик тарăнăн сывласа илчĕ:

— Хĕрлĕ Çар вăхăтлăха чакрĕ. Станцине нимĕç салтакĕсем килсе тулчĕç. Пурте пыйтлă. Сысна пек хыçаланаççĕ. «Пыйтăрсенчен тасалма вырăс мунчине кĕрес пулать сирĕн», тетĕп эпĕ. Кайран хама-хам вăрçса пĕтертĕм. Ак хăйхи нимĕçсем мана мунча хутма хушаççĕ. Итлемесен вĕлерессине кăрытаççĕ. Ирĕксĕрех мунча хутса паратăм. Пĕрисем мунча кĕрсе, çăвăнса тухрĕç. Килĕшрĕ пулас вырăс мунчи. Татах мунча хутма хушаççĕ.

Пĕр кун, икĕ кун мунча хутса паратăп. Нимĕç салтакĕсем пурте вырăс мунчине кĕме вĕренсе çитрĕç. Пĕр кĕрсен мунчаран тухма та пĕлмеççĕ. Хăшĕсем каçхине те ăшă мунчара çывăрма вĕренсе кайрĕç.

Кунĕпе мунча хутнипе шалт ывăнса çитетĕп. Киле таврăнсан карчăк ятлаçма тытăнать: «Шăп пурăнма пĕлмесĕр, хăвна ху ĕç тупрăн. Çын кулли вĕт, фашистсен тарçи пулса тăтăн. Батăлса вилетĕн, ăсу кĕрсе çитмерĕ», тесе хăртать карчăк.

Питĕ тарăхса çитрĕм: «Мĕн пирки-ха эпĕ çак тăшмансене мунча хутса парса, пыйтисенчен тасалма пулăшатăп? Ан тив, вĕсен ÿчĕсене пыйтăсем кышласа пĕтерччĕр. Мĕнле майпа вĕсене мунчаран сивĕтес?» — тесе шухăшлатăп.

Карчăк çаплах çĕрпи-çултине хăвармасăр ятлаçать. Вăл ятлаçнине те илтес килми пулса çитрĕ. Ăçтан çеç килсе çыхланчĕç ку фашистсем? Чун тарăхать. Анчах нимĕн тума та çук. Никам та мар, хамах айăплă. Халĕ ĕнтĕ тÿс. Çавă кирлĕ сана. Улĕмрен ăслă пулăн.

Вăл кун фашист офицерĕсем валли мунча кутарчĕç. Мунча кĕмелли милĕк касма вăрмана кайрăм. Сасартăк ман пата пĕр çын çитсе тухрĕ:

— Мучи, мĕн туса çÿретĕн кунта? — ыйтать манран çав çын.

— Мунча кĕме милĕк касатăп, — тетĕп.

— Камсем валли мунча хутрăн?

— Фашист офицерĕсем валли,—тетĕп.

— Апла пулсан манăн та мунча кĕме пырас-ха, — тесе кулать çын.

— Пыр, пыр. Мунча шел мар, ăшши çителĕклĕ, вĕри шыв нумай хатĕрленĕ, — тетĕп.

— Эсĕ ху кам пулатăн? — тесе ыйтрăм çынран.

— Халĕ каламастăп. Акă мунча кĕме пырсан пĕлĕн эпĕ камне,—тет çын.

Милĕк касрăм та таврăнтăм. Мунча пулчĕ. Акă виçĕ офицер мунча кĕме пычĕç. Хăйсем мунча кĕреççĕ, мана мунча умĕнче хурал тăма хушрĕç. Мунча умĕнче тăратăп. Сасартăк хăйхи вăрманта курнă çын мунча патне пырать.

— Мучи, акă эпĕ те мунча кĕме килтĕм, — тет.

— Асту, мунча сывăхне ан кил. Халĕ офицерсем кĕреççĕ, — тетĕп.

— Ан хăра. Эпĕ офицерсемпе пĕрле мунча кĕресшĕн, — тет çын. Хăй çаплах мунча патнелле пырать.

Офицерсем мунчара шывпа шăпăртатаççĕ. Вĕсемшĕн савăнăç. Эпĕ вĕсемшĕн мунча хутса пар, милĕк касса кил тата хурал тăр. Çавтери мăшкăл!

Хайхи çын хĕвĕнчен граната туртса кăларчĕ те, мунча чÿречинчен тÿрех шалалла ывăтрĕ.

— Мучи, хăй хăвăртрах мунча аякка умĕнчен! — тесе кăшкăрчĕ.

Эпĕ мĕн пиккенне пĕлмесĕр тăратăп. Мунча сывлăшпа çĕкленсен тин чухласа илтĕм. Вăл çын ахаль çын мар, партизан пулнă.

Çын вăрманалла чупрĕ, эпĕ те унăн хыçĕнчен юлмарăм.

— Юлташ, пĕтертĕн эсĕ мана. Халĕ ĕнтĕ эпĕ ку станцире юлма пултараймастăп. Вĕлереççĕ вĕсем мана, — тетĕп.

— Ан хăра, мучи, атя хампа пĕрле, партизан пулăн, — тет мана çын.

Çапла вара эпĕ партизан пулса тăтăм.

Кайран вара фашистсем ман пирки карчăка ав епле асаплантарса вĕлернĕ. Хĕрĕх çул эпир унпа арлă-арăмлă пурăннă. Халиччен пĕрне-пĕри нихăçан усал сăмах каламан, ирсĕр фашистсем пире ĕмĕрлĕхех уйăрчĕç, — тесе пĕтĕм чунĕнчен тарăхать старик-партизан. Вăл карчăкĕ çине пăхать те, унăн куçĕсенчен куççулĕ тухса, сĕркеленчĕк пичĕ тăрăх юхса анать.

— Ан йĕр мучи. Санăн карчăкку ахаль мар, тăван çĕршывшăн вилнĕ. Эсĕ нимĕç офицерĕсене пĕтерме партизансене пулăшнă, — тесе лăплантаратпăр старике.

Старик пирĕнпе килĕшет. Вăл ватă пулин те фашистсене хирĕç вĕсене çĕнтериччченех çапăçма хатĕр.

Н. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 010 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.